21-42
1083

Йумах кěнекисен пуххи № 1.

Раççей Хветерлтсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респуп

Пĕтĕм тĕнçери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

Л. Н. Толстой.

# Ухмах Иван, салтак Çимун, мăн хырăм Тарасси, т,ĕлхесĕр Малани, тата пĕр ватă шуйттанпа виçĕ усал çури çинт,ен çырнă йумах.

(Сказка об Иване-дураке и его двух братьях: Семеоне-воине и Тарасе-брюхане и немой сестре Маланье и о старом дьяволе и трех чертенятах).

На чувашском языке.
Тĕп Чăваш Пайĕ кăларнă.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате
по Национальным делам.
Хусан—1921 çул.

Йумах кӗнекисен пуххи № 1.

Раҫҫей Хветератсийӗн Сотсиалисӑмла Канаш Респуп

Пӗтӗм тӗнҫерти пролеттарисем, пӗрлешӗр!

Л. Н. Толстой.

# Ухмах Иван, салтак Ҫимун, мӑн хырӑм Тараҫҫи, т,ӗлхесӗр Малани, тата пӗр ватӑ шуйтанпа виҫӗ усал ҫури ҫинт,ен ҫырнӑ йумах.

(Сказка об Иване-дураке и его двух братьев: Семеоне-воине и Тарасе-брюхане и немой сестре Маланье и о старом дьяволе и трех чертенятах).

На чувашском языке.

Тӗп Ҫӑваш Пайӗ кӑларнӑ.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате
по Национальным делам.
Хусан—1921 ҫул.

Р. В. Ц. Казань. 6000 экз.

## УХМАХ ИВАН, САЛТАК-ҪИМУН, МĂН-ХЫРĂМ ТАРАҪҪИ, ҖĔЛХЕСĔР МАЛАНИ, ТАТА ПĔР ВАТĂ ШУЙТАНПА ВИҪĔ УСАЛ ҪУРИ ҪИНҖЕН ҪЫРНĂ ЙУМАХ.

### I.

Тахăш патшалăхра, тахăш ĕмпӳ ҫĕрĕнҗе пĕр пуйан ҫын пурăннă. Унăн виҫ ывăл пулнă: Салтак-Ҫимун, мăн-хырăм Тараҫҫи, ухмах-Йван, тата пĕр Малани йатлă хĕр пулнă, вăл та җĕлхесĕр пулнă. Салтак-Ҫимунĕ патшашăн тăрăшма салтака кайнă. Унта вăл асла тухса улпут хĕрне илнĕ, тата хăйне пурăнмалăх йалта ҫаклатнă. Салтак-Ҫимунăн шалуйĕ те йалĕ те пысăк пулнă—пурăнăҫĕ ҫапах хире-хирĕҫ ҫитеймен. Упăшки пуҫтарнине арăмĕ салатсах тăнă. Йаланах укҫаран татăк пурăннă. Пурăнсан-пурăнсан Ҫимун хăйĕн йалне хыраҫ пуҫтарма кайнă. Прикашҗăкĕ куна: „хатĕр-хĕтĕрĕ, выҗăх-җĕрлĕхĕ ҫук та хыраҫ ниҫтан та тупма пулмасť. Ҫавсене туйансан мĕн пулĕ вара,“ тенĕ.

Ҫимун аптраса ашшĕ патне җуптарнă та ăна ҫапла каланă: „Атте, ес пурăнăҫ тытатăн пулин те мана нимĕн те памарăн. Виҫ тӳпинҗен пĕрне уйăрса пар-ха, епĕ

ӑна хам йала куҫарам“, тенӗ. Ашшӗ купа: „есӗ ман пата нимӗн те йамарӑн, сана мӗнпӗн виҫҫӗмӗш пайне парас? Иванпа Малани кӑмӑлне те хуҫас килмест, тесе ҫавӑрса хунӑ.

Салтак-Ҫимун ашшӗне хирӗҫ: „Ухмахпа ӡӗлхесӗре мӗн кирлӗ?“ тенӗ. Ашшӗ вара: „Иван мӗн калӗ“ тенӗ. Иванӗ тата: илтӗрех ара, мӗн, тенӗ хунӑ.

Салтак Ҫимун тӳпине ҫаклатса хӑйӗн йалне куҫарнӑ. Унтан вӑл каллех патшашӑн тӑрӑшма вӑрҫа тухса кайнӑ.

Мӑн-хырӑм Тараҫҫи те ӡилӑй укҫа пухнӑ. Вӑл та авланнӑ: хуҫа хӗрне илнӗ. Ӑна ҫавах сахал пулнӑ. Тараҫҫи те ашшӗ патне пырса: „Хам тӳпейе уйӑрса пар,“ тенӗ. Ашшӗ кӑна та парасшӑн пулман: „есӗ хӑв пирӗн пата мӗн йатӑн? Кунти пурлӑха Иван пуҫтарса Иванпа йӑмӑку кӑмӑлне те хуҫас килмест, аӡам,“ тенӗ. Тараҫҫи кӑна хирӗҫ: „Ухмахпа ӡӗлхесӗре пурлӑх (мул) ним тума та кирлӗ мар: вӗсем авланас та ҫук, каӡӡа та кайас ҫук, тенӗ. Иван, ес мана кӑҫал ҫапнӑ тыррин ӡен ҫуррине анӡах пар. Хатӗр-хӗтӗр мана тиркемест. Выӡӑх-ӡӗрлӗхрен мана леш витере тӑракан хӑла ӑйӑрне анӡах пар, ес уншала ҫапах суха тӑвас ҫук“, тенӗ.

Иван кулса йанӑ та: „Илсем ара мӗн, еп тата ӗҫлесе тупӑп-ха“, тенӗ. Ҫапла Тараҫҫи те хӑй тӳпине ҫаклатнӑ. Тыррине туртарса тухнӑ, ӑйӑрне те ҫавӑтса кайнӑ.

Иванĕ пĕр ватă кĕсрипе аштĕпе амăшне тăрантарма киле йулнă.

II.

Ватă шуйттана çак тăвансем пĕр вăрçмасăр, хуралашмасăр кăмăлтан уйăрăлни пит тарăхмалла пулнă. Аптранипе вăл виçĕ усал çурисене ҫĕнсе илнĕ те:—Авă, куратăр-и? виçĕ тăван пурăнаҫҫĕç, тет: Салтак—Çимун, Мăнхырăм Тараççи тата ухмах Иван. Вĕсем уйăрăлнă ҫух йурин те пĕр-пĕрипе çапăçса пĕтмелеҫҫĕ. Темшĕн хаҫ те пулин лайăх пурăнаççĕ? Çитменни çине тата хире-хирĕç ĕçсе çиеççĕ. Ман ĕçе ухмахĕ пăсса пăрахрĕ. Есир виççĕр те кайса вĕсене тапăнăр та, усалланса пĕр-пĕрин куçĕсене тĕксе шăтариҫҫен те ан пăрахăр. Çапла тума пултаратăр-и? тет ватă шуйттанĕ.

— Пултаратпăр,-теççĕ лешсем.

— Йепле пултаратăр?

— Акă мĕнле, теççĕ. Малтан çимелли пĕттĕр тесе вĕсене тĕппипех çарататпăр. Кайран пĕр çĕре пухатпăр та хăйсемех çапăçма тытăнаççĕ, теççĕ лешсем

— Есир ĕçне пĕлетĕр пулмалла, йурĕ, тет асли. Кайăр та, çавсене алла кӳртмесĕр ман пата ура пуснăтуна ан пултăр, ахалĕн виççĕрĕнне те тирĕрсене виçетĕп“, тет.

Усал çурисем ĕçе тытăнатҫен пĕр йĕпе шура канашлама ларнă. Пурте çăмăлтарах ĕçпе çаклатасшăн тупăшса

йӑлӑхсан, шӑпа йамалла тунӑ. Шӑпара хӑш тӑванӗ тухать, ҫавӑн патне каймалла тунӑ. Маларах пӗтерекеннин ыттисене пулӑшма пымалла тунӑ. Тата кам мӗн ӗҫлевине, кама пулӑшмаллине пӗлмешкӗн, вӑхӑтне те туса хунӑ. Вара вӗсем харпӑр-хӑй шӑпи тӑрӑх саланнӑ.

Хайхи вӑхӑт иртсен усал ҫурисем каллех ҫавӑ шупа пуҫтарӑннӑ. Кам мӗн ӗҫлени, мӗн туни ҫинҫен пуплеме тапратнӑ. Малтан Салтак-Ҫимунӗ патӗнҫе пурӑнакане ҫапка калаҫа панӑ:—Ман ӗҫ пырать-ха. Ыран Ҫимун каллех ашшӗ патне таварнать", тет. Йулташӗсем кунтан: ес ӑна мӗнле алла кӳртрӗн?, теҫҫӗ. Лешӗ: еп малтан Ҫимуна патша умӗнҫе пӗтӗм ҫут ҫанталӑка туртса илетӗп тесе мухтанма пысӑк хастарлӑх патӑм, тет. Патша Ҫимуна ӗненҫӗ те ӑна ҫар пуҫлӑх турӗ, Интий патшине вӑрҫма йаҫӗ. Ыран вӑрҫма тытӑнас тенӗ ҫухне еп кайса Ҫимунӑн пӑшал тарне йӗпетсе тӑкрӑм. Ҫийӗнҫен Интий катши патне кайса, улӑмран вӗҫӗ-хӗри курӑнми ҫарӑ туса тултартӑм. Ҫимун ҫарри Интийсем хупласа илнине кура шикленме тапратрӗ. Ҫимун Интийсене хирӗҫ тупӑсемпе пӑшалсемпе пеме хушрӗ, анҫах туппи пӑшалӗ тарӗ йӗпе пирки папт та тумарӗ. Ҫимун ҫарри хӑраса урине салта пуҫларӗ. Интий патши ҫийеле тухрӗ. Салтак-Ҫимун намӑса йулҫӗ. Упӑн йалне кайалла туртса илҫӗҫ, ыран вӗлереҫҫӗ. Ҫимуна тӗрмерен тартмашкӑн пӗр кун анҫах кирлӗ. Ыран ӗҫ пӗтеретӗп, иксӗртеп хӑш не пулӑшмалла, калӑр, тет.

Тараҫҫи патӗнҗи усал та хӑйӗн ҫинҗен калама пуҫланӑ.

— Мана пулӑшу кирлӗ мар, тет. Ӗҫӗ ман та ӑнаҫ Тараҫҫи пурӑнӑҫӗ ернерен малах мар, тет. Малтан епӗ унне хырӑмне хӑпартса йатӑм, сӑхлантарма тапратрӑм. Вара вӑл ҫын ырлӑхне пит хапсӑнма пуҫларӗ. Куҫа мӗн курӑннине пурне те ҫавӑрса илесшӗн.

Хаҗ вӑл мӗн пур укҫипе тавар илме тапратрӗ Илсе тултарса-ха тата илесшӗн, кивҫене кӗрсе илет. Кив ҫен те нумай илсе тултарҗӗ. Йӗрне ҫӗтерҗӗ. Хӑй ырлӑ хӗ шутне те пӗлмест. Тен йӗрне те тупас ҫук. Ернерен еп ун таварӗнҗен тислӗк туса лартатӑп. Вара укҫине тӳлеймесӗр киле ашшӗ патне тавӑрнаҫ", тенӗ.

Кусем Иван патӗнҗи усалран та: „сан тата мӗнле пурӑнаҫ-ха" тесе ыйтма пуҫланӑ.

— Ух, ман латти ҫук! тет. Ӗҫ ӑнмасҫ, калама та ҫук, тет. Малтан еп унӑн вар-хырӑмӗ ыраттӑр тесе кӑвас җӑмӗ ӑшне сурса тултартӑм. Унтан суха тунӑ ҫӗрте ӑшӗ пиҫтӗр тесе уййа кайса анине җуллантарса лартрӑм. Ман ухмах пыҗӗ те, ӑҗасем, лутӑртатармах тапратрӗ: хӑва ҫурас пек мӗркӗнет, ҫавах сухалаҫ. Аптраса куптине тӑпӑлтартрӑм-усси пулмарӗ: киле кайрӗ те купти пӑйавӗпех ҫӗнӗрен лартса килҗӗ. Каллех сухалама тапратрӗ. Йулашкинҗен тӑпра ӑшке кӗрсе суха тимӗрсенҗен ҫулса илсе пӑхрӑм: май килмерӗ. Йепле җармалла унта—суха

пуç çинелле сĕвенсе йарат̆ те, ухмах-аллусем ҫăтҫăр анҫах. Аллăма ахаљ те-темиçе çĕртен çурса пĕтертĕм. Хаљ сухине пĕтернĕпе пĕрех, ĕнтĕ пĕр ана анҫах йулҫĕ. Пулăшма килетĕр пулĕ, аҫасем. Куна аптратмасан пирĕн виççĕмĕрĕн те ĕççем пăсăлаççĕ. Ухмах çĕр ĕçлесе лашсене те тăрантарма пултарат̆“, тет. Салтак-Çимун патĕнҫи усалĕ тепĕр кунах пыма пулнă та, çак сăмах çиййĕнҫе вĕсем саланнă.

## III.

Иванăн çĕртме сухи пĕр ана анҫах йулнă. Вар ыраҫаҫҫин те сухалас пулат̆. Суха пуçпе çавăрат̆ те уйа кайат̆ ку. Сухаласа пĕрре çавăрăнсанах, кайалла таврăннă ҫух суха тимĕрĕнҫен тем... тымар çакланнă пек туйăнвă. Уна усал çури ури аллипех пăталанса ҫарса лартнă мĕн. Иван хăй ăшĕнҫе: „шăпах тĕлĕнтĕм ĕнтĕ, тымар çук çĕртех тымар тухрĕ-и ĕнтĕ?“ текелесе аллине тăпра ăшне ҫиксе суха тимĕрсем хушшинҫе хыпалакаласа пăхат̆ те—ҫăнах кун аллине тем çемçескер кĕрех кайат̆. Иван кăна çăлса илет те туртат̆ кăларат̆. Йапали пăхма тымарлаллах, хупхураскер, анҫах тăррине тем... тапаланкалат̆. Иван тинкеререх пăхат̆ те—усал çури. „Ăçтан пур киресĕр йĕрĕнҫĕк çакланат̆-ши?“ тесе Иван çавăрса çапма тăнă. Леш сехри хăпнипе: „ан вĕлер, сана еп уншăн мĕн кирлĕ ăна туса парăп“, тенĕ,

— Мĕн туса парăн есĕ?

— Кала ес мĕн кирлине.

Иван аптраса пуçне хыçкаланă та: „Ман пит вар ырататтţĕ-ха, çавна тÿрлетейрĕн-пин?“ тенĕ.

— Пултаратăп,—тенĕ лешĕ.

— Тÿрлет еппин.

Усал çури кукленсе ларса суха кассинţен виç йуплĕ тымар кăкласа кăларнă та çапла вĕрентсе Ивана тыттарнă.

— Акă, çак тымар йупне çăтса йаракан çын кирек мĕнле ţиртен тĕ ţĕрĕлет, тенĕ. Иван унтах пĕр йупне татса çăтса йанă. Унăн вар-хырăмĕ унтах ыратма ţарăннă.

Вара усал çури: „Тек кунта ура пусмăп, çĕр тĕппех анса кайăп, йар мана,“ тесе тархаслама тапратнă. Иван: „Тур пулăштăр,“ тенĕ те, усал турра асăнсанах ţул шыва путнă пек, çĕр тĕппелле анса кайнă, шăтăкĕ апţах йулнă, Иван хайхи тымарăн икĕ йупне çĕлĕк ăшне ţиксе каллех сухалама тапратнă. Сухаласа пĕтерсен, Иван суха пуçне çавăрнă та киле таврăннă. Лашине тăварса вăл пÿртелле кĕрет—салтак-Çимунпа арăмĕ апат çисе ларасçĕ. Унăп йалне туртса илнĕ. Тĕрмерен те аран ашшĕ патнелле тухса тарнă.

Çимун Ивана курат те: сан пата вăхăтлăха куçрăмха, çĕр вырăп тупиţţеп усран пуţ“, тет

— Пурӑнсамӑр ара мӗн, мана мӗскер," тет Иванӗ.

Иван вӗсемпе пӗрле сӗтел хушшине апат ҫиме кӗрсе ларсан, улпут майрине шӑршӑ кӗнӗ пек туйӑннӑ та: „Кунашкал шӑршӑллӑ ҫынпа апат ҫиме пулмасть," тесе упӑшкине ӗлӗк пама тапратнӑ. Салтак-Ҫимун вара арӑмӗ хутне кӗрсе: „ман майра санран усал шӑршӑ кӗрет тет, пусма вӗҫне тухса ҫи-ха", тенӗ.

— Мӗскер ара, манӑн ҫавах выртма каймалла ҫҫӗ-ха", текелесе Иван сӑхмапе тӑхӑннӑ та ҫӑкӑр сӑмси ҫиксе выртма тухса кайнӑ.

IV.

Ҫакӑ ҫӗр салтак-Ҫимун патӗнҫи усал хӑйсем сӑмах пӗтерне пӗк, Иван усалӗ патне нимене пынӑ, ухмаха аптратма. Суха тунӑ ҫӗре пырса пӑхать—ҫук. Йулташне шырать шырать-ку-ниҫта та ҫук. Пӗр шӑтӑк анҫах тупӑнҫӗ. „Ахаљ мар ку—йулташа мӗн те пулин ҫакланнӑ. Ун вырӑнне хамӑн тӑрас пулать ӗнтӗ. Утӑ ҫинҫе аптратма пулӗ-и? Сухине пӗтернӗ пулмалла", текелесе шухӑшласа ҫӳрет. Усал, Иван ҫаранӗсем ҫине кайнӑ та тылӑ пуҫҫи кӑларса тултарнӑ та хӑйӑр ухтарса лартнӑ. Иван ирпе кӑвак ҫутӑрах выртмаран тавӑрӑннӑ, ҫавине туптанӑ мӗн-тунӑ та утӑ ҫулма тухса кайнӑ. Ҫулма тапратсан пӗр-иккӗ кастарсанах-кун ҫави мӑкалнӑ кайнӑ, лапашкаламалла та пулнӑ. Хытлансан хытлансан Иван: „Ҫук, тет, киле кайса туптанҫӑкпа ҫӑкӑр илсе килеп те, вара кирек-ерне пурӑнам та ҫулса пӗтер-

месĕр каймастăп, тет. Усал çури ку сăмахсене хăлхана ӡикет те шухăшлать: „Ку ухмаха нимле те улталаймăн, урăх ăс тупса аптратма пулмĕ-и мĕн?“ тет.

Иван хайхи туптанӡăксене персе килсе çулма тапратрĕ. Усал çури курăк ăшне кĕрсе ларнă та Иван çавине кĕллинӡен йăта йăта йарса тирĕнтерме тапратнă. Йывăр пулин те Иван хăтлансан хăтлансан шурăри пĕр çаранне анӡах хăварнă. Усал çури каллех шура кĕрсе ларать те шухăшлать: „аллăма касса татсан та çулма памастăп“ тет. Иван хайхи шурăри çаранне кĕрсе пăхать-утă пит те çărах мар: çава хыттăнах илес çук. Иван çилли-пĕшшипе тарăхса сулать те çавине, утта çиçет анӡах—усал çури сиксе çеç ĕлкĕрет. Усал ĕçĕ ăнмаиине кура-тĕмĕ ăшне хĕсĕнсе ларнă. Иван хĕрсе кайнипе усал çури пытаннă тĕмме çаплипех çулать пăрахать—усал хўрин çурри татăлать кайать. Çулса пĕтерсен Иван йăмăкне утă силлеме хушса хăварать те, хăйĕ хăва крепленлĕ çава илет те ыраш çулма кайать.

Пырать ыраш çулма—унта усал çурри çитсе пĕтĕм ыраша аркаса тăкнă, çулма та майĕ йулман. Иван çурла илсе пырать те, вырса пĕтерет. „Малалла сĕлĕ çулас пулӡ ĕнтĕ,“ тет. Хўресĕр усал кăна хăлхине ӡикет те шухăшлать: „Ӡим-ха ире çитем, сĕлĕ çулнă çĕрте те тăну тухĕха“ тет. Усал ирех Иван ăни çине пырса пăхать—сĕлле йăпăлтах çулса кайнă. Иванĕ ăна ан сăлăрăлтăр тесе çĕр-

ле пырса çулса кайнă. Усал тарăхнипе: „Ку ухмах пирки хўрем те алă-урам та йулмарĕ. Хама хам пăшăрханса пĕтрĕм. Кунашкал хурлăх вăрçăра та курман. Çывăрма та пĕлмес те вăл--ăçта ăпа аптратас. Кайам та çĕмелĕсене çĕртсе йарам“, тет.

Усал ыраш çĕмелли ăшне кĕрсе ларат те çĕртме тапратат. Çĕмелли ăшăнарах парсан усал хăй тĕлĕрсе кайнă. Иван вăл вăхăтра кĕсрине кўлнĕ те йăмăкне лартса кĕлте туртарма çитет.

Лашине çавăрса кĕлтине тийеме тапратрĕ. Урапа çине пĕр-ик кĕлте илсе хурсанах тепĕрне илпĕ ҫух усала кутĕнҫен сенĕкпе çаклатат илет. Кĕлте тесе çўлелле хăпартса пăхат—сенĕк тăрринҫе ҫип-ҫиперех усал çури: тапкаланкалат, кукăркаланат—сиксе ўкесшĕн, анҫах леш вирлĕ тирсе лартнă.

— Йĕрĕнҫĕк! ес каллех кунта-п-ха? тет Иван.

— Епĕ пĕркунхи мар—уп пиҫҫĕшĕ, сирĕн Çимун патĕнҫи, тет усал çури.

— Ес кирек кам пăтĕнҫи пулсан та тек манран ыррăнах вĕçĕрĕнеймĕн ĕнтĕ,“ тет. Иван куна та вĕлерме шутлянă мĕн, анҫах леш хыттăн тархаслама тапратнă: „Йар мана, тет; тек кунта ура йарса пусмăп; йар—еп сана мĕн кирлĕ ăна туса парăп“, тет.

— Ес мĕскер тума пултаратăн?

— Еп карек-мĕн йапаларан та салтаксем тума пул таратăп.

— Мĕн тăвас вĕсемпе?

— Мĕн тутарас килет ăна тăваççĕ.

— Йурлама пултараççĕ-и?

— Пултараççĕ.

— Тусам еппин.

Усал Ивана çапла каласа вĕрентме тапратнă: „Ыраш кĕлти ил те кутăн силлесе çапла кала: санра миçе улăм пĕрҫи çавăн ҫухлĕ салтак пулма хушат,“ те, тесе вĕрентнĕ. Иван çапла каласа пĕр кĕлтене кутăн силлесен ҫăнах та салтаксем пулса тăнă: малта парапан çапакансемпе тŷттŷрŷт калакансем те пур. Иван кулса йанă.

Ак мĕнле ăстаçă. Кулă хĕрсене ахăртма пит лайăх,“ тет.

— Хаҫ йаратăн пуҫ?

— Тăхта-ха, еп кусене çапнă улăмран тăвас тетĕп, капла тырă сайа кайат, калла кĕлте тума вĕрент, куна çапмалла.

— Хуçу, миçе салтак, çавăн ҫухлĕ улăм пĕрҫи пулма хушат, тесе вĕрентнĕ. Иван çапла каласанах салтаксем калла кĕлте пулса тăнă.

Усал тата: „йарах ĕнтĕ, Иван!“ тет.

Иван хайхине çŷçĕнҫен тытса сенĕк тăррингҫен вĕçертнĕ те: „тур пулăшчăр, ыр çул пултăр“, тесе йанă.

Турра асӑнсанах усал айакалла тата сикнӗ те, ӡул шыва путнӑ пек, ҫӗр тӗпнелле анса кайнӑ. Пӗр шӑтӑк анӡах йулнӑ.

Каҫпа Иван киле пынӑ. Пӑхаҭ—Тараҫҫи пиӡӡӗшпе инкӗш апат ҫисе лараҫҫӗ. Парӑмсепе парса татайман пирки ашшӗ патне тарса килнӗ. Ивана курсанах ку:

— Суту-илӳ туса пуйиӡӡен арӑмпа инкӗне тӑрантӑрха, Иван шӑлнӑм, тет.

— Пурӑнӑрах ара, мӗн, тет Иванӗ.

Иван сӑкманне хывнӑ та, сӗтел хушшине кӗрсе ларнӑ. Хуҫа майри кӑна: „ман ухмахпа пӗрле апат ҫиме пулмасӑ, унтан тар шӑрши перет, тет. Тараҫҫи пиӡӡӗш вара Ивана: ман арӑм санран тар шӑрши кӗрет, тет—пусма вӗҫне тухса ҫи-ха ес, тет.

— Ман ахалех выртма каймаллаӡӡӗ-ха, текелесе Иван ҫӑкӑр сӑмси ӡикнӗ те выртма тухса кайнӑ.

## V.

Ҫав каҫах усал ҫури Тараҫҫипе ӗҫ пӗтерсе Иван патӗнӡи йулташсене пулӑшма пынӑ. Суха тунӑ ҫӗре пырса шыраӑ, шыраӑ ку нихӑш те ҫук. Пӗр шӑтӑк тупрӗ. Ҫаран ҫинӡе хӳре татӑкки, ыраш хӑмӑлӗ ӑшӗнӡе тепӗр шӑтӑк тупрӗ. Усал ҫури шухӑшлаӑ: ыршӑн мар капла пулса пӗтнӗ. Кусем ырӑнне ухмахпа ҫапӑҫма хамӑн тӑрас пулаӑ“, тет.

Вара Тараççи патĕнҫи усал Ивана шыраса ун анкартине ҫупнă. Иван авăнне нĕтерсе вăрмана вутă тума кайнă.

Усал вăрмана çитсе Иван касас йывăç тăрне хăпарса ларнă, лангтарнă. Иван тем пек çара çĕре ӳкмелле касаҫҫĕ, анҫах йывăçĕ кăшт сулăнсанах ланкрĕ. Рыҫак касса илсе куна аран-аран ӳкеркелерĕ. Тепĕрне касăт-вăл та ленкет. Хытлансан, хытлансан хуллен ӳкерҫĕ. Тата тепĕрне-вăл та çавах. Иван касҫен пĕр аллă хулă касма ĕмĕтленнĕ мĕн. Вуннăшне те касайман—каçала сулăнса йлнă. Иван асапланса пĕтнĕ. Хăйĕнҫен тар йухат, çавах ĕçлеме пăрахмасă. Иван тепĕр йывăç касса йаҫĕ—тем пилĕк çĕмĕрме тапратрĕ кун, аптрасах каймалла, пуртне каска çине касса лартрĕ те канма ларҫĕ ку. „Вăйран сулăнҫĕ пулмалла, пăрахат. Епĕ те сывлăша çавăрса илетĕп ĕнтĕ“, текелесе усал çури те хăрăк турат çине канма утланса ларҫĕ. Унҫен те пулмарĕ Иван сиксе тăрат те усал ларнă йывăçа тепĕр йенҫен пуртăпа пĕррех парат те, йывăç çăтăр-çатăр анат ӳкет, усал çурине хĕстерет лартат. Иванăн тĕлĕнмен вырăн та йулмач.

— Ĕ-ĕ-ĕ йĕксĕк! ес каллех кунта-и.ха? тет Иван.

— Еп урăххи, сан Тараççи пиҫҫу патĕнҫи, тет, леш.

Иван кăна пурт тăршипе çапса лапҫăтма шухăшланă мĕн, анҫах леш:

— Ан çап мана мĕн кирлĕ ăна туса парăп, тесе тархаслама тапратнă.

— Мĕн тăвайратăн есĕ?

— Еп сана мĕн ђул кирлĕ таран укçа туса парăп, тет.

— Тусам тата.

Вара усал çури Ивана укçа тума çапла каласа вĕрентнĕ: „çак йуман çулçисене илте аллу çинђе сăтăр, çĕрелле ылттăн тăкăнĕ, тенĕ“.

Иван сулçă илсе ывăç тупанђе сăтăрнă та ђăнахах çĕрелле ылттăн тăкăна пуçланă.

— Ку праçниксенђе ађасемпе выђама пымалла мĕн, тет.

— Иван йарах ĕнтĕ, тет усалĕ.

Иван рыђакпа хирсе усала йывăç айĕнђен кăларнă та „киле çитме тур пулăштăр“, тесе йанă. Усал турра асăн санах çĕр тĕпнелле анса кайнă. Пĕр шăтăк анђах йулнă

VI.

Тăванĕсем кил-çурт çавăрнă та уйăрăлнă. Иван ĕç пĕтерсен сăра тунă, пиђђĕшсене ĕçке ђĕннĕ. Пиђђĕшсем пыман: „хресђен ĕçки курман-и? мĕн? тенĕ. Вара Иван кӳршĕсене ђĕнсе ĕçтернĕ. Хăй те сыпкаланă, пуçĕ хĕререх панă. Çăмăлланса урам хушшине йашăсем патне йурлама тухнă.

Хĕрсем патне пынă та:

— Мана мухтаса йурласан еп сирĕ ĕмĕр курман йапала парăп, тет. Хĕрсем купа кули-мыскари мухтаса йурлакаласан:

— Кăтартсам, тата, теççĕ.

Иван пĕрне илсе вăрманалла утнă. Хĕрсем Иванран кулса йулнă, ухмах тенĕ. Иван çинђен мана та пуçланă. Пăхаççĕ—хайхискер вăрмантан тавăрнат, кунтник ăшне тем тултарнă.

— Кирлĕ-и? тесе кăшкăрат.

— Кирлĕ, теççĕ.

Иван пĕр ывçă ылттăн ывăçласа илнĕ те хĕрсем ăшнелле сапнă. Хĕрсем: „апи-у-у!“ тесе пуçтарма тапратнă. Арçынсем те ђупса тухнă: пĕринђен пĕри ăмăртса çуркалаççĕ анђах—таптаса пăрахасса та пĕлмеççĕ. Пĕр карђăка кĕçех вĕлермен. Ивана пăхма мыскăра кулса анђах тăрат.

— Пĕрне пĕри ан лăђăркăр, тата парăп, тет. Тата тасапма тапратрĕ. Халăх пуçтараннă. Иван пĕр кунтă шăпах сапса пĕтерђĕ. Çыннисем тата ыйтаççĕ. Иванĕ калат: „пĕтрĕ, тепре кайсан персе килĕп. Хађ атăр ташлас, йурлас, тет.

Хĕрсем йурă тапратнă.

— Есир хитре йурламастăр, тет.

— Кам хитре йурлат тата, теççĕ.

— Кăшт тăхтасан курăр ак, тет. Ку анкартине ҫупса кайнă та капаиран пуш кĕлте туртса кăларнă та уна кутăн силлесе ҫапла каланă: „хуҫу кĕлтери улăм пĕрҫисенҫен салтаксем пулма хушат", тенĕ. Кĕлтерен унтах салтаксем пулса тăнă. Парапансемпе тўт тўрўтсемпе ахăртма та тапратнă. Иван салтаксене йурлаттарса урамалла йертсе тухнă. Халăх тĕлĕнсе хытнă. Йурласа пĕтерсен Иван салтаксене каллех йертсе кайнă. Хăй хыҫҫăн никама та пыма хушман. Салтаксенҫен каллех кĕлте туса капан ҫинелле ывăтнă та пўрте кĕрсе ҫывăрма выртнă.

VII.

Ҫимун пиҫҫĕш салтаксем ҫинҫен илтсен тепĕр кунне Иван патне пынă.

— Калаха, ĕнер ес вăл хисеп салтак ăҫтан тупса килтĕн, тет.

— Ес мĕн тăватăн вĕсемпе.

— Йепле мĕн тăватăн? Ҫырлахтăрах! Салтаксемпе мĕн тума пулмаст. Вĕсемпе сут ҫанталăк ҫавăрса илме пулат.

Иван тĕлĕнсе каланă; халиҫҫен сан ҫĕлхў мăн пулса-имĕн? Еп сана мĕн кирлĕ тăранах туса нама—турра тавă, кăҫал кĕлте ҫилай, тет.

Иван пиҫҫĕшне анкартине илсе кайнă та калат: асту, тет, еп тунă ҫĕре йертсе кайса тăр, тет, ахалĕн вĕсем пирĕн йала пĕтĕмпех кўпсе йарĕҫ, тет.

Çимунĕ илте кайса тăма пулнă та Иванĕ салтаксем тума тытăннă. Пĕр кĕлтипе тытса çапат—пĕр ротă пулса тăрат, тепĕрне çапат—тепĕр ротă пулса тăрат. Пĕр уй уйăппех салтак туса тултарҫĕ ку.

— Çитет-и? тет.

Çимунĕ хĕпĕртенипе: „çитĕ-ха халҫ, тавă, тет.

— Кирлĕ пулсан тата кил—туса парăп, кăçал кĕлте нумай-ха, тет.

Салтак-Çимунĕ унтах çар пуçлăхĕ пулнă та салтаксене пĕр çĕре пухса вăрçа йертсе кайнă.

Салтак—Çимун хыççăнах Иван патне мăн хырăм Тараççи персе те çитнĕ. Вăл та ĕнерхи ылттăнсем çинҫен илтсе тархаслама тытăннă:

— Иван шăллăм, ĕнерхи ылттăнсем тĕлне тур пӳл кала мана, тет. Ман унашкал ирĕклĕ укçа пулсан халиҫҫен çут çанталăкри укçапа пĕтĕмпех çавăрса илмелле, тет.

Иван тĕлĕннĕ. Апла пулсан тахăçанах калас. Еп мĕн кирлĕ тарапах варанах варашласа памалла, тет.

Тараççи хĕпĕртенипе: „пĕр виç кунтă та пулин туса пар-ха“, тет.

Иванĕ: ата вăрмава, мĕскер ырă туса парап, тет. Лашта кӳлес пулат, ахалĕн сĕтĕрсе çитерейменĕпĕр, тет.

Вăрмана çитрĕç кусем. Иван хайхи йуман çулçине варашлама тапратрĕ. Илттăн ҫылай купаланҫĕ.

— Çитет-и? тет Иванĕ.

Тараççи хӗпӗртенипе çитӗ-ха хаҫ, тавӑ, тет.

— Кирлӗ пулсан тата кил çулçӑ нумай-варашласа парӑп, тет.

Тараççи пӗр урапа ылттӑн тултарса сутӑ тума тухса кайнӑ.

Çапла вара икӗ пиҫҫӗш те тухса кайнӑ: Çимунӗ-вӑрçа, Тараççи суту-илҫу тума. Çимун икӗ патшалӑх туртса илнӗ. Тараççи ҫылай укçа купаланӑ.

Пӗрре çавсем иккӗш хирӗç пулнӑ та пӗринҫен пӗри мӗнле пуйни çинҫен илтсе тиркенӗ. Çимун ӑçтан салтаксем тупнине каланӑ, Тараççийӗ хӑй укçи вырӑнне каланӑ.

Салтак-Çимун калат: „Тараççи шӑлвӑм, аҫа каллех Иван патне, тет“. Еп сан укçуна хураллама сактаксем тутарам, тет, ес ман салтаксене тӑрэнтарма укçа тутар, тет.

Иккӗш те çак сӑмах çинҫе Иван патне кайма шут тытнӑ. Çитрӗç. Çимунӗ тӳрех: ман салтаксем çухалҫӗç. Тата туса пар-ха. Хаҫ пӗр-ик капанри кӗлтерен тусан та йурамалла, тет.

Иван пуçне силлесе тин сана салтаксем туса памастӑп, тет.

— Мӗнле тата, ес сӑмах патӑн-ӗç?

— Сӑмах панӑ пулин те туса памастӑп.

— Ма тумастӑн ӗнтӗ, ухмах?

— Сан салтаксем çынна çапса пăрахнăшăн туса памастăп, тет Иван. Еп вiçĕм кун çул хĕрринче суха тăвiтăп. Çул çинелле пăха патăм пĕр арăм тупăк туртарса кайат, хăй макăрат.

— Кам вилсе? терĕм.

— Упăшкама Çимун салтаксем вăрçăра çапса пăрахрĕç, терĕ. Еп салтаксем йурă анчах йурлаççĕ пуль тесе, вĕсем çынсене çапса прахаççĕ мĕн. Урăх памастăп, тет.

Çапла вара Иван Çимун пиччĕшне салтаксем туса паман. Тараççи пиччĕш те ухмахран укçа ыйтма тытăннă.

Иван каллех пуçне силлет те:—çук, тет, тин сана ылттăн туса памастăп, тет.

— Мĕпле ес тата? Сăмах патăн-ĕç?

— Сăмах панă пулин те тумастăп.

— Ма тумастăн тата ухмах?

— Сан ылттăнсем Михальа арăмĕн ачисенчен ĕне туртса илнĕ, çавăнпа тумастăп, тет.

— Мĕнле туртса илчĕ-ха тата?

— Акă мĕнле Михальа арăмĕн ĕне пурччĕ. Ачисем сĕт çийеччĕç. Ĕнер ун ачисем сĕт çиме ман пата килчĕç. Еп вĕсене: хăвăр ĕне ăçта?, терĕм те—туртса илсе терĕç.

— Кам терĕм?

— Мăн хырăм Тараççи тарçисем килчĕç те апла вiç

ылттӑн йапала парса ӗнене ҫаватса кайрӗҫ. Хаҫ пирӗн ҫимелли ҫук, терӗҫ. Еп сана ылттӑн йапаласем выҫама ҫирлӗ пуҫ тесе—ес вӗсемпе тӑлӑх аҫасен ӗвине туртса илсеттӗн. Урӑх памастӑп, тет.

Ҫапла каласа хунӑ та урӑх паман. Пиҫҫӗшсем ахалех тухса уттарнӑ.

Пиҫҫӗшсем киле таврӑнсан йепле хуйхӑран ҫӑланас тесе шухӑшлама ларнӑ. Ҫимунӗ: ак ҫапла тупӑр, тет. Ес мана салтаксепе тӑрантарма укҫа пар, еп сан укҫуна хураллама ҫур патшалӑхне салтакӗ мӗнӗпех парӑп, тет. Тараҫҫи килӗштернӗ. Ҫапла сиплешкелесе иккӗш те ҫаплӑ патшасем пулса тӑнӑ.

VIII.

Иван килте нурӑннӑ. Ашшӗпе амӑшне тӑрантарнӑ. Ҫӗлхесӗр хӗрӗпе уйӑра ӗҫленӗ.

Пӗрре унӑн йытӑ аҫи халсӑр пулнӑ, вилме патнех ҫитнӗ. Ивана вӑл шеллӗн туйӑннӑ. Йӑмӑкӗнҫен пӗр татӑк ҫӑкӑр илнӗ те ӗҫлӗк ӑшне хурса тухса йытта ыватса панӑ.

Ӗҫлӗкӗ ҫурӑк пулнӑ. Хайхи тымар йупӗ ҫӑкӑрпа пӗрле тухса ӳкнӗ. Ӑна йытӑ хыпса йанӑ. Йытӑ ҫаваттах вара Иван йӗри тавра вӗре-вӗре, хӳрипе пӑтраткаласа, сиккелесе ҫавӑрнма тапратнӑ. Ӗлӗкхи пекех сывалнӑ

Иван ашшӗпе амӑшӗ ҫакна курнӑ та тӗлӗнсе хытнӑ.

— Ес йытта йепле сыватрăн? тенĕ.

— Ман ĕçлĕк ăшĕнӟе пур ӟиртен те сыватакан икĕ тымар пурӟӟĕ, çавна çăтса йаӟĕ те ӟĕрĕлӟĕ, тенĕ.

Çак вăхăтрах патша хĕрĕ халсăр пулнă. Патша хăйĕн халăхпе çапла каласа пĕлтернĕ: „ман хĕре сыватакан çынна çур патшалăхне парăттăм, тенĕ. Сыватаканĕ каӟӟă пулсан, хĕрне уна парăттăм, тенĕ. Çакна Иван йалĕнӟе те пĕлтернĕ.

Ивана ашшĕпе амăшĕ ӟĕнсе илеççĕ те:

— Патша сăмахĕ хăлхана кĕрет-и? кайас çавăнта, Иван, теççĕ. Хайхи тымар пурăç сан. Ĕмĕрлĕх ырăлăха кĕрсе ӳкетĕн, теççĕ.

— Ма кайас мар, тет Иван. Кайма тапранӟĕ. Тумлантарсан, мĕн тусан Ивана пусма вĕçнелле анна ӟух пĕр хăрăк алăллă ыйткалакан хĕр-арăм тĕл пулнă.

— Ес пур ӟиртен те сывататăн тенипе илтсеӟӟĕ, унна килтĕм. Аллăма тӳрлет, ура та сыраймастăп, тет.

— Мĕн ара, тет Иван. Хайхи тымара туртса кăларат те ыйткалакан арăма çăтма хушат. Çавна çăтсанах ыйткалаканăн алли вылӟама тапратнă. Ашшĕпе амăшĕ Ивана патша патне ăсатма тухсан ырăлĕ йулашки тымарĕпе кĕлĕмçе сыватнине илтсен: „кĕлĕмçе хĕрхенсе патша хĕрне пĕтертĕн“, тесе вăрçма тапратнă.

Ивана патша хĕрĕ те шеллĕн туйăнна. Вăл ут кӳлнĕ те урапи çине улăм хурса кайма тапранса ларнă.

— Тин, ăçта кайатăн, ухмах?

— Патша хĕрне сыватма.

— Мĕнпе сывататăн?

Иван мĕскер ара, тенĕ те утне хăвала панă.

Патша кил хушшине çитрĕ ку пусма çине пуссанах—патша хĕрĕ сывалҫĕ тăҫĕ.

Патша хĕпĕртенипе Ивана хăй патне ҫĕнтерсе кӳртнĕ, тумлантарнă та! малалла кĕрӳ пулăн, тенĕ.—Мĕскер ара, текелесе Иван патша хĕрне илнĕ. Патша нумай та пурăнман—вилнĕ. Ун вырăнне Иван ларнă. Çапла вара виçĕ тăван та патша пулса тăнă.

IX.

Виçĕ тăванĕ те патшара пурăннă. Асли—салтак-Çимунĕ лайăх пурăннă. Вăл хăйĕн улăм салтакĕсемпе ҫипер салтаксемех пуçтарнă. Патшалăхĕнҫе ырă йĕркесем (саккунсем) кăларнă. Вунă килтен пĕр ҫăн вăйлă, пысăк, таса, хитре çынне салтака илмелле тунă. Çапла вăл салтак нумай пуçтарнă, пурне те вăй вĕрентнĕ. Хаҫ вăл вăрçма пăрахнă. Салтаксене хăратма анҫах усранă. Салтак-Çимунран пурте хăранă.

Пурăнăç ун ытла та ырă пулнă. Мĕн шухăшлаŤ, мĕн хапсăнаŤ—йăлтах пулса тăраççĕ. Салтаксене йаŗаŤ те лешсем мĕн кирлине пурне те туса килеççĕ.

Мăн хырăм Тараççи те аван пурăннă. Вăл та Ивантан илнĕ укçине салатман—ун çумне ҫылай хушнă,

Патшаläхне вăл та йĕре кÿртнĕ. Укçиве тимĕр арçасем ăшĕнçе тытнă. Хăлăхĕнçен укça пуçтарнă. Куланайне вăл çунран та, ерехрен те, сăраран та, венçетрен те, вилĕрен те, çĕрĕрен те, утлинçен те, çураннинçен те, тăлинçен те, çăпатинçен те, çĕтĕкрен те илнĕ. Халăхне укça кирлĕ—укçи ун аллинçе. Халăхĕ вара тĕрлĕ ĕçпе, тĕрлĕ хатĕрпе, тĕрлĕ выçăх-çĕрлĕхпе ун аллинçен укça çăлса илсе тăнă. Çапла Тараççийĕн те пурăнăç лайăх пулнă: вăл мĕн шухăшларĕ—пулса тăрат. Укçашăн ăна тем те пĕр параççĕ: ĕçлесе те параççĕ, хатĕр-хĕтĕр те параççĕ, мĕншĕн тесен пурне те укça кирлĕ.

Ухмах Иван та йапăхах пурăнман. Хуçа—старикĕ вилсенех вăл арăмне çутă çаплă тумтирсене арçана питĕрме хушнă. Унтан килти пир кĕпи, кăвак йĕм, çăпата тăхăнnă та ĕçлеме тухса кайнă. „Ĕçĕре аптрарăм, хырăм çитĕнме тапратрĕ, çийес те килмест, çыврас та килмест, тенĕ. Ашшĕпе амăшне, çĕлхесĕр хĕрне хăй патне илсе килсе каллех ĕçлеме тапратнă.

— Ес патша-ĕç ара, теççĕ куна çынсем.

— Мĕскер патшапăн та хырăм выçат, тет ку.

Кун патне пĕр министăр çупса пыçĕ те: „пирĕн укça пĕтрĕ, шалу памалли çук, тет.

— Мĕскер ара, çук пулсан ан пырăр, тет.

— Вĕсем вырăнĕсенçен тухса кайатпăр, теççĕ тет

— Тухаҫҫин—хуйхи сахал. Тухҫӑр—ӗҫлеме ирӗкрех пулать. Вӗсем тислӗк ҫылай тултӑрсаҫҫӗ-ха унта ҫавна тасатҫӑр, кала, министӑрне, тет Иванӗ.

Тата Иван патне икӗ ҫын сута пынӑ. Пӗри калать: „Ҫак ҫын мапне укҫа вӑрларӗ,“ тет. Иван: „кирлӗрен вӑрланӑ пулӗ, мӗн тата тет“.

Вара пурте Иван патша ухмахне пӗлсе ҫитнӗ. Арамӗ те: „Иван сана ухмах теҫҫӗ, тет.

Иван арӑмне хирӗҫ: калаҫҫин, мӗн ара! тет. Вара Иван арӑмӗ шухӑшланӑ шухӑшланӑ—никӗн те тухӑшласа кӑларайман. Вӑл та кӑшт лӗпки ҫине ӑвӑс пусмантарах пулнӑ.

— Мана мӗн упӑшкама хирӗҫ каймa? тет ку. Йӗппи хыҫҫӑн ҫиппи. Вӑл та патша тумтирсене хурса арҫана питӗрнӗ те ҫӗлхесӗр Малани патне ӗҫ вӗренме кайнӑ. Ӗҫ вӗренсе ҫитсен упӑшкине пулӑшма тытӑннӑ.

Пур ӑслӑ ҫын Иван патшалӑхӗнҫен тухса тарнӑ—пӗр ухмахсем анҫах юлнӑ. Никамӑн та пӗр пус укҫа пулман. Пурте ӗҫлесе пурӑннӑ. Хӑйсене хӑйсемех тӑраннӑ—ыр ҫынсене те тӑрантарнӑ.

X.

Ват шуйттан ҫурисенҫен хыпар кӗтнӗ кӗтнӗ—сӑмах йумах нимӗн те ҫук. Пӗлкелеме хӑй тухса утнӑ. Шыранӑ шыранӑ—нихӑшне те тупайман. Виҫӗ шӑтӑк анҫах тупнӑ. „Куеем пултараймап пулмалла, хамӑн тӑрас пулӗ,“ тенӗ

Ку виçĕ тăвансене шырама кайрĕ. Вĕсем хаҫ ĕлĕкхи вырăнсенҫе мар—тĕрлĕ патшалăхсенҫе пурăннă. Вĕсене виçĕ патшалăхра пин шыраса тупнă. Виççĕш те патшара пурăнаççĕ. Куна курсан ватă шуйттан питĕ пăшăрханма тапратнă.

— Ĕçне хам алла илем-ха, тет.

Малтан вăл салтак-Çимун патне, çăр пуçлăхĕ пулса пынă та ес хастаррине еп илтсеҫҫĕ, тет. Еп вăрçă таврашĕнҫе пит ăста çын, çавăнпа сана кăшт пулăшас тесе килтĕм, тет. Салтак-Çимун çынтан илтсе тиркекелесе пăхсан ăсне пĕлсе ăна вырăна кўртнĕ.

Çĕнĕ çар пуçлăхĕ Симуна питĕ кăпмар, вăйлă çарă пуçтарма ăс панă.

— Малтан салтакĕсене ҫылайрах пухас пулат, тет, ахалĕн сан патшалăхра ĕçсĕр аптраса çўрекен çын нумай, тет. Йашшисене пĕр тиркемесĕрех пуçтарас пулат, вара вĕсем саншăн вăрçаççĕ. Йаш арăмĕсем сан алла йулаççĕ. Кайран хĕç-пăшал çĕнĕрен кăларас пулат. Еп сана çĕршер пуҫккăв, пăрçапа сапнă пек сапакан пăшал туса парăп. Пуҫккисем тивсен сикссе çурăлса кайаççĕ те егеме таврăрса хурăççĕ. Тупăсене вутпа çунтаракан туса парăп. Çынна, ута, ҫул хўмене те, кирек-мĕнле йапалана та çунтарат.

Çĕнĕ çар пуçлăх хыççăн кайса салтак Çимун хăйĕн патшалăхĕнҫи мĕн пур йашăсене пуçтарнă. Çĕнĕреч хĕç-пăшал савăҫĕсем тутарнă. Çĕнĕ тупă пăшал туса тултарса-

нах ку кӳршӗ патшалӑхӗпе вӑрҫма тытӑннӑ. Хӑйне хирӗҫ тӑшман ҫарри тухсанах Ҫимун патша хӑйӗн салтаксене хайхи ҫӗнӗ тупӑсемпе пӑшалсемпе пеме хушнӑ. Ҫапла вара вӑл тӳрех тӑшманӑнне ҫур ҫаррипе амантса, суранлантарса, вӗлерсе тӑкнӑ. Кӳршӗ патши хӑраса ӳкнӗ те парӑннӑ. Ҫимун патша хӗпӗртесе йанӑ. „Халь еп Интей патшине те туртса илме пултаратӑп ӗнтӗ", тет Ҫимун хӑй ӑшӗнче. Интей патши те уна кура Ҫимунӑннешкелех туса пӗтернӗ. Хӑш-хӑш тӗлте Ҫимунӑнчен те вирлӗрех тунӑ. Интей патши йашшисене анчах мар-хӗресне те тӗп-пипех пуҫтарнӑ. Ҫапла унӑн ҫарри Ҫимунӑннинчен хӑватлӑрах пулнӑ. Хӗҫ-пӑшал таврашне Ҫимунран пӑхса тунӑ, тата ҫинчен вӗҫсе кайса айӑлалла пӑмпӑсем пӑрахмалли тунӑ.

Ҫимун Интей патшине те кӳршӗ патшинешкелех тӑвӑп тесе ун ҫине вӑрҫма кайнӑ, анчах хӑйне ҫакланнӑ. Ҫимун патшан салтаксем пӗр пульккӗ йаричченех Интей хӗрсем ҫӳлтен вӗҫсе пырса пӑмпӑсемпе пеме те тапратнӑ. Ҫимунӑн ҫарӗ ура салтнӑ, хӑй пӗччenех йулнӑ. Интей патши Ҫимуна ҫавӑрса илнӗ. Вара Ҫимун куҫ ӑҫталла пӑхат-унталла тарнӑ.

Ватӑ шуйттан Ҫимуна пӗтернӗ те Тараҫҫи патне кайнӑ. Вӑл хуҫа пулса Тараҫҫи патшалӑхне йата ӳкнӗ. Унта тӗрлӗ хапрӑксем лартса укҫа кӑларма тапратнӑ. Ку хуҫа пур йапалашӑн та хаклӑрах панӑ, унпа халӑх та

укҫа тупма ун патне тирӗннӗ. Укҫашӑн тӗрлӗ хатӗр, тӗрлӗ ӗҫ улӑштарнӑ. Ҫапла пурӑнкаласан халӑх укҫалана пуҫланӑ. Куланай тӳлейменнисем пурте тӳлесе татнӑ, малалла вӑхӑтлӑ тӳлеме пуҫланӑ.

Тараҫҫи патша хӗпӗртенӗ. „Тавӑ ку хуҫана, манӑн укҫа хушнӑшӑн, пурӑнӑҫ тата аванланать“, тет. Вара Тараҫҫи патша хӑйне валли тӗрлӗ ҫаплӑ хитӗрсем тутарма тапратнӑ. Пӗрре Тараҫҫи хӑйне валли ҫаплӑ ҫурт тутарма тытӑннӑ. Ку хӑйӗн халӑхпе ҫапла ҫурт валли ҫул йывӑҫ туртарма ҫӗнтернӗ. Хакӗшӗн тӳмасть. Тараҫҫи ӗлӗкхи пекех халӑх укҫашӑн ун патне тирӗнӗ тесе шухӑшланӑ. Пӑхать- пур вӑрман, ҫул йӑлтах хайхи хуҫа патне куҫать. Пур ӗҫ пӗлекен ӑстаҫӑсем те ун патне куҫҫӗ. Тараҫҫи тата хакне хӑпартарах парать, лешш уптап та ҫӳлерех. Тараҫҫин ҫаплӑ ҫурҫӗ пулаймарӗ.

Тараҫҫи пахҫа тутарма тӑнӑ. Кӗр ҫухарарах парсанку пахҫана йывӑҫ лартма халӑх ҫӗнтерет. Пӗр ҫын та ҫук—шӑпах хайхи хуҫа патне пӗве пӗвелеме тирӗннӗ. Хӗле кӗрсеп Тараҫҫи хӑйне валли кӗрӗклӗх хаклӑ йышши тирсем шырама йанӑ. Тир шырама кайаканӗ тавӑрнать те: хура тилӗ тирӗ те ытти хаклӑ тирсем те ҫук-хайхи хуҫа шӑпах хаклӑрах парса илнӗ те ура айне сармаллисем туса лартнӑ, тет. Тараҫҫи патшанӑ ӑйӑрсем кирлӗ пулнӑ. Илме йарать. Илекенӗ тавӑрнать те: пур ыр ӑйӑр хайхи хуҫа патӗнҫе пӗвене шыв туртараҫҫӗ, тет. Патша ӗҫсем

ђарӑнса ларӗӑ. Пурте хуҫана ӗҫлесе парасшӑн. Тараҫҫи патшана валли хуҫа укҫине анђах йӑтаҫҫӗ, куланай тесе тыттараҫҫӗ.

Патшанӑн укҫа йышланса кайнӑ та ниҫта ђикме те вырӑн йулман. Пурӑнӑҫ усалланса ҫитвӗ. Патша аптранӑ. Йенле пурӑнасси ҫинђен анђах шухӑшлат. Пур ҫӗртен те канђӑрлама тапратвӑ Тараҫҫи патша патӗнђен нур апат пӗҫерекенсем те, ут тытакапсем те, пур тарҫисем те хайхи хуҫа патне куҫнӑ. Тараҫҫинӗн ҫимелли те ҫывхарнӑ. Пасара йарса пӑхат—йӑмцӑлтик, ним те ҫук: йӑлтах хайхи хуҫа сӑтӑрса кайнӑ—Тараҫҫине куланай тесе укҫине анђах сӗнеҫҫӗ.

Тараҫҫи ҫиленсе хуҫана хӑйӗн патшалӑхӗнђен хӑваласа кӑларса йанӑ. Лешӗ тата лап ђык ҫипе ларвӑ каллех уп патне халӑх тӗкӗнет. Хуҫа укҫишӗн хатӗр-хӗтӗр туртараҫҫӗ. Патша йӑлтах аптраса ҫитрӗ. Кунӗ-кунӗпе ҫийеймест. Тараҫҫи тата ҫитменни ҫине: хайхи хуҫа Тараҫҫи арӑмне те сутӑн илетӗп, тесе мухтаннине илтнӗ. Тараҫҫи нимӗн тума та пӗлмест.

Салтак-Ҫимун кун патне килет те: Тараҫҫи шӑлнӑм, ӑн пӑрах, мана Интей патши пӗтерђӗ, тет.

Тараҫҫин хӑйӗн мӑйӑран ункӑлавӑ пек.

— Еп хам хаљ икӗ кун хӗлхем ӑша йаман, тет.

## XI.

Икӗ тӑванӗпе те ӗҫ пӗтерсен ват шуйттан Иван патне кайнӑ. Шуйттан ҫар пуҫлӑхӗ пулат те Ивана ҫарӑ

тытма хӗтӗртет.— Патшана ҫарӑсӑр пурӑнни килӗшмест, тет. Мана хуш анҫах еп сана вӑр-варах салтаксем пуҫтарса парӑп, пысӑк ҫарӑ пулӗ, тет.

Итлерӗ куна Иван.

— Ес тӑвасси ту та—йурлама лайӑхрах вӗрент. Еп унашкалла пит йурататӑп, тет.

Ватӑ шуйттан Иван патшалӑхӗ тӑрӑх салтак пуҫтарма тухса кайнӑ. Пурне те, хӗрлӗ ӗҫлӗк, ерех парӑп тесе астарса, ҫамкисене хыртарма пыма хушнӑ.

Ухмахсем кунтан кулма тапратнӑ.

— Ерехе пирӗн ирӗклӗ, теҫҫӗ. Ӗҫлӗкӗсене пирӗн арӑмсем санӑшкал хӗрлӗ мар-ула муркалӑ та ҫӗлесе параҫҫӗ, теҫҫӗ.

Салтака никам та кайман. Ват шуйттан каллех Иван патне пырать те.

— Сан ухмахсем кайсем килмеҫҫӗ, вӑйпа илсе килес пулать, тет.

— Вӑйпа хӑвала еппин, тет.

Ватӑ шуйттан вара ухмахсене: кам салтака пыманнине вӗлерет, тесе пӗлтернӗ.

Ухмахсем ҫар пуҫлӑх патне пыраҫҫӗ те: епир салтака каймасан пире патша вӗлерет тетӗн, анҫах салтакра мӗн пулассине пӗлтермерӗн. Салтакра та вӗлереҫҫӗ тенине илтсе... епир, теҫҫӗ.

— Унсăрах пулмаст çав, тет леш. Ухмахсем кăна илтсеп кайалла цăхнă.

— Каймастпăр, теççĕ.

Аҫа-пăҫамăра; арăмсене тăлăхлантарса хăварни мĕн усси вăл. Тата хамăрн та таçта шăтăка кайса вилмелле. Апла хытланиҫҫен кунта вилес. Унтан çавах хăтăлас çук, теççĕ. Итлемен.

— Ек ухмахсем есир, ухмахсем! тет ват шуйттан. Салтак те вилет-ха, те вилмест—ăна пĕлес çук, анҫах салтака каймасан сире Иван пурне те вĕлерет, тет.

Ухмахсем Иван патне ыйтма кайнă.

— Пирĕн патра пĕр çар пуçлăхĕ тухса, теççĕ. Пурне те салтака хăвалат. Каймасан Иван вĕлерет, тет. Кайсан та вилесси—ҫĕрлессине пĕлес çук. Ҫăнах-и çак? теççĕ.

Иван кулса йанă.

— Йепле еп сире пурне те пĕҫҫен вĕлерĕп? тет. Еп ăслă пулсан сире ăнлантарăнҫҫĕ—хам та йĕрне пĕлместĕп, тет кусене Иван патши.

— Апла пулсан каймастпăр, теççĕ:

— Каймасан та йурат, тет.

Ухмахсем çар пуçлăх патне пырса: каймастпăр, Иван хушмарĕ, тесе хăварнă.

Ку ĕç ăнманнине кура, ват шуйттан таракан патши патне пынă та йĕкĕлтеме тытăннă.

— Аҫа Иван патшана кайса туртса илер, тет. Унăн укҫа апҫах ҫук, ытти ырлăхĕ ҫителĕклĕ, тет.

Таракан патши пысăк ҫарă пухнă та тупă пăшалĕсене йусаса Иван патшалăхнелле кĕме тапратнă.

Иван патпе пырса:пирĕн ҫине вăрҫă килет, тесе систернĕ.

Килтĕрех ара, мĕн.

Леш Иван ҫикки урлă каҫса Иванăн ҫарне шырама тапратнă. Темле шырасан та Иван ҫарне тупайман. Кĕтсе те кĕтсе илеймеҫҫĕ. Ҫарă ҫинҫен сăмах йумах та ҫук. Шуйттан хĕтĕхленĕ патша вара Иван патшалăхĕнҫи йалсене ҫĕмĕрсе туртса илме хушса йанă.

Салтаксем пĕр йала пырса кĕрсен ухмахсем хĕрĕн арăмĕн ҫупса тухнă та шăпах тĕлĕнсе кайнă. Салтаксем ухмахсем тырри-пуллине, выҫăх-ҫĕрлĕхне туртса илме тапратнă. Ухмахсем кăшт та хирĕҫ тăмаҫҫĕ, йăлтах параҫҫĕ, хăйсем патне пурăнма ҫĕнеҫҫĕ.

— Хăтасем, сирĕн патра пурăнма питĕ хĕн пулсан пирĕн пата килĕр, теҫҫĕ.

Ҫӳресен-ҫӳресен таракан патши салтакĕсем тăшманăн ҫарри ҫуккине кураҫҫĕ. Халăхĕ тутă, тăшмансене те тăрантараҫҫĕ, хирĕҫ тăмаҫҫĕ, хăйсем патне пурăнма ҫĕнеҫҫĕ.

Ҫавăнпа салтаксем ĕҫсĕр антраса тăракан патши патне таврăннă.

— Унта вăрçса пулмаст, тепĕр çĕре йар пире, теççĕ. Вăрçĕ вăрçă майлă пулсан йурĕ-ку кĕсел каснăн анçах туйăнат. Урăх унта вăрçма та тăмаст, теççĕ.

Таракан патши çиленсе кайнă. Вăл хай салтаксене Иван патшалăхĕ тăрăх пур йалсене те, тырри-пуллине те пурне те çунтарса çўреме хушнă. Выльăх-чĕрлĕхне те вĕлерсе пĕтерме хушнă. Итлемесен салтакĕсене пурне те çакатăп, тенĕ.

Салтаксем шикленсе патши хушнă пек тума тапратнă. Çуртĕсене, тырри-пуллине çунтарма, выльăх-чĕрлĕхне вĕлерме тапратнă. Ухмахсем çавах хирĕç тăмаççĕ—ватти вĕтти пуртĕ куç-çулĕпе улаççĕ анçах.

— Мĕншĕн пире пĕтеретĕр? Мĕншĕн есир усалшăн ырлăха пĕтеретĕр? Кирлĕ пулсан хăвăра валли илĕр аван тарах пулĕ, теççĕ ухмахсем.

Вара таракан патши салтакĕсене намăсăн туйăннă. Малалла кайман. Саланса пĕтнĕ.

## XII.

Вата шуйттанăн Ивана салтаксемпе пĕтермесĕрех таварнмалла пулса тăнă.

Вара вăл тирпейлĕ, çипер уллут пулса Иван патшалăхне пурăнма кайнă. Ивана та Тараççи пиçĕшкешкелех укçапа пĕтерме шутланă.

— Еп сире хӗрхенсе ӑс вӗрентес тетӗп, тет. Сире тӗрлӗ усӑллӑ ҫуртсем туса парӑп, тет.

— Пурӑнсӑм ара, мӗн, теҫҫӗ.

Теҫетнӗк улпут валли вырӑн тупса панӑ, вӑл унта ҫывӑрма йулнӑ. Улпут ирпе ҫывӑрса тӑрсан пӗр мих ылттӑн йатса, тата тепӗр листӑ хут тытса урам хушшине тухнӑ та калаҫ: есир сыснасем лӑпах пурӑнатӑр. Еп сире пурӑнма вӗрентес тетӗп. Ҫак пӑлана пӑхса мана валли ҫурт тӑвӑр. Есир ӗҫлӗр—еп кӑтартаканӗ пулам. Ку ылттӑн укҫисепе сире ӗҫленӗшӗн парӑп тет. Ылттӑнне кӑтартнӑ. Ухмахсем тӗлӗнсе кайнӑ. Вӗсем ку таранҫҫен ылттӑн сӑнне те курман. Кирлӗ вӑхӑтра хатӗрпе хатӗр улӑштарнӑ, ӗҫпе ӗҫ те улӑштарнӑ. Ухмахсем ылттӑнтан тӗлӗнсе кайнӑ. „Савӑклӑ йапаласем“ теҫҫӗ. Ылттӑн йапаласемшӗн вӗсем вара тӗрлӗ хатӗр тӗрлӗ ӗҫ те пырса пама тапратнӑ. Ватӑ шуйттан Тараҫҫи патӗнҫи пекех ылттӑн кӑлармa пуҫланӑ. Ӑка ылттӑншӑн тӗрлӗ хӗтӗр-хӗтӗр, тӗрлӗ ӗҫ те пыра-пыра панӑ. Ват шуйттан хӗпӗртенипе шухӑшлаҫ: ку ухмаха та. Тараҫҫине ҫаратнӑ пекех ҫарататӑн ӗнтӗ. Хытлансах хытлансан еп ӑна пӑхӗ-шӑкӗпех укҫалла сутап, тет. Анҫах ухмахсем ылттӑнне ҫителӗклӗ туйанса ҫитернӗ. Арӑмӗсене валли шӑрҫалӑх илсе тултарнӑ, хӗрӗсен ҫип туни вӗҫне йарса пӗтернӗ. Хаҫ аҫасем урамра ылттӑнсемпе выҫҫама тапратнӑ. Ҫапла пурте туйанса ҫитерсен ылттӑн кайми пулнӑ. Никам та илмен. Таса, ҫи-

пер улпут хӑй ҫуртне ҫуррине та тутарайман, хӗл касмалӑх тыр-пулӑ та, выҙӑх-ҙӗрлӗх те хатӗрлеймен. Вара улпут тырӑ-пулӑ, выҙӑх-ҙӗрлӗх хӑй патне леҫнӗшӗн ылттӑн тата нумайтарах парӑп, тесе кӑшкӑртарнӑ.

Кирек-мӗнле астарсан та ухмахсем ун патне ылттӑншӑн вимӗскерӗте илсе пыман. Тепле пӗр-пӗр аҙа пырсан ылттӑнла ҫӑмарта улӑштарса кайат йе шыв кӳртсе парат-ахаҙ никам ҫыне те ура пусмаст. Ҫапла ҙипер улпутӑн ака шӑмми сиктермелли те ҫывхарнӑ. Ҙипер улпут выҫӑхса какӑрсан йал тӑрӑх ҫимелли сутӑн илме тухнӑ. Пӗрин патне пырат те ҙӑхӑшӑн ылттӑн. сӗнет—леш памаст: ахалех нумай тет. Теприн патне пырат те тӑварлӑ пулӑшӑн ылттӑн кӑларса парат: кирлӗ мар, тет леш, аҙампӑҙам ҫук, кам выллӗ ман вӗсемпе, ахалех хитрешӗн пӑхма виҫҫӗшне илсе-ха, тет. Тӑта теприн патне ҫӑкӑр илме ҫитет. Вӑл та укҫа илмест: мана кирлӗ мар. Ҙим-ха, Христус йаҙӗпе пӗр ҙӗлӗ касса парам еппин, тет. Шуйттан кӗҫех хӑсса йаман—сура-сура тухса уттарнӑ. Христус йаҙӗпе илме мар, Христус йатне илтсен те ӑна ҫӗҫӗпе тиркинҙен те ытлараххӑн туйӑннӑ.

Ҫапла шуйттан ҫӑкӑрсӑрах йулнӑ. Ҫынсем килӗсене кӗрсе пӗтнӗ. Шуйттан кирек-ӑҫта кӗрсен те ним те памаҫҫӗ, пурте: урӑх мӗн те пулин илсе кил, йе ӗҫлеме кил, йе Христус йаҙӗпе ил, теҫҫӗ. Ват шуйттан ҫиленсе кайнӑ.

— Еп сире ылттăн паратăп та, ман мĕн ĕçлес? Есир ылттăнпа чем те тупăр: тарçă тă тупма пултаратăр, тет. Ухмахсем хăйсен йурринех йурлаççĕ.

— Укçа пире кирлĕ мар. Пирĕн хыçăç тÿлес хуйхи çук, нимĕн те тÿлеместпĕр, укçапа мĕн тăвас? теççĕ. Шуйттан апат çимесĕрех çывăрма выртнă.

Çак сăмах ухмах Иван патне çитнĕ. Ун патне çынсем çакнашкал ыйтупа пынкă: мĕн тăвас? теççĕ. Пирĕн хушăра пĕр таса, ҫипер улпут тухса кайрĕ. Апатне-çимĕçне тутлă çийеестĕн, тумтирне таса тăхăнасшăн, ĕç ĕçлесшĕн мар хăй. Пур йапалашăн та ылттăн çаврашкисем анҫах парать. Пурте ылттăнланса çитиҫҫен ăна параҫҫĕç, халӈ пами пулҫĕç. Мĕн тăвас пирĕн унпа? Христус йаҫĕпе илмест, таçта выçă вилĕ.

Куна Иван итлесе пăхрĕ.

— Мĕн терĕр есир—тăрантарас пулать. Кĕтÿçĕ пек йал тăрăх (çисе) тăранса çÿретĕр еппин, тет Иван.

Шуйттан йал тăрах тăранса çÿре пуçланă.

Ивана та ҫерет çитнĕ. Шуйттан апат çиме пынă. Иванăн ҫĕлхесĕр йăмăкĕ апат антарнă. Кахалтараххисем ăна таçта ҫасах улталанă. Хăйсем ĕçлемеççĕ—малтараххран çитсе пăттине кÿпсе йараççĕ, ҫĕлхесĕр хĕрĕ те вĕсене паллама вĕреннĕ: алли ĕçлесе хăмпуланвине сĕтел хушшинелле, ахалĕн апат йулашки анҫах пама вĕреннĕ.

Ватӑ шуйттан та сӗтел хушшинелле пӑхнӑ, анҫах ҫӗлхесӗр хӗр уна аллинҫен ҫӑлса илсе пӑхат̆ те алли тап-таса, шап-шурӑ, йап-йака, ҫӗрнисем тем тӑршшӗнӗ. Ҫӗлхесӗрӗ куна мемлекелесе ҫиперӗнтерех сӗтел хушшинҫен ҫавӑтса кӑларса йанӑ.

Иван арӑмӗ кӑна: ан йатла, хӑта, пирӗн хӗрсем ҫавнашкал-ҫке, алли хӑпарман ҫынна сӗтел хушшине лартмаст̆. Ак ҫынсем тӑрансан йулашки мӗн йулнине ҫийӗн, тет.

Патша патӗнҫе сыснасемпе пӗрле тӑрантарнӑшӑн ватӑ шуйттан питӗ кӑмӑлсӑр пулнӑ. Ҫавӑнпа вӑл Ивана ҫапла ӳпкелеме тапратнӑ: сан патшалӑхра пур ҫын та ӗҫлемелли йӗрке ухмахла йӗрке вӑл. Ӑна есир хӑвӑр ухмах ӑсӑрсемпе кӑларсӑтӑр. Ӑслӑ ҫынсем мӗнпе ӗҫлеҫҫӗ тетӗн ес? Иван калат̆: пирӗн ухмахсен ӑҫта пӗлсе ҫитес. Епир кирек-мӗнле ӗҫе те алӑпах туса пурӑнатпӑр, тет.

— Вӑл есир ухмах пирки апла. Еп сире пуҫпа ӗҫлеме вӗрентӗп. Вара есир хусамӑрах пуҫпа ӗҫлени алӑпа ӗҫленинҫен усӑлӑраххине курӑр.

Иван тӗлӗнсе йанӑ.

— Ахаҫ мар пире ухмах теҫҫӗ ҫавӑ, тет.

Вара шуйттан ҫапла вӗрентме тапратнӑ: есир пуҫпа ӗҫлеме ҫӑмӑл тетӗр пуҫ-вӑл ӗҫ алӑпа ӗҫленинҫен ҫӗр хут йывӑртарах, хӑш-ҫух аплах пуҫ шӑтӑртаттарма тапратат̆.

Иван куна илтсен шута кайнĕ. Ма апла таран асапланатăп? Пуç шăтăртаттарма тапратни тутлах мар çав. Мăн шутпа вăл хăйсем асапланиҫҫен алăпа ĕçлени авантарах пулмалла.

— Сире ухмахсене хĕрхенсе çав таран асапланатăп. Еп сирĕншĕн асапланмасан есир ĕмĕрлĕх ухмаха йулăр. Еп пуçпа ĕçлеме ăста, сире те вĕрентес, тетĕп.

Иван тĕлĕннĕ.—Вĕрент, вĕрент ахалĕн хăш ҫухне алă йăлăнса çитет, вĕсен вырăнне пуçпа ҫакăлтанас,

Шуйттан вĕрентме пулнă.

Вара Иван хăй патшалăхĕ тăрăх: пирĕн патшалăхра пĕр таса улпут пурне те пуçпа ĕçлеме вĕрентесшĕн. Пуçпа алăран ĕнĕçлĕрех ĕçлеме пулаĭ, пурте вĕренме килĕр, тесе кăшкăрттарнă.

Ухмах Иван патшалăхĕнҫе пĕр çӳлĕ пашне пулнă, ун тăррине тӳрех пусма сенктернĕ, ҫăн тăррике çӳлĕлĕтсе кĕпер хунă мĕн. Иван таса улпут сăмахĕсене пурте илҫҫĕр, пурте ăна куçпа курҫҫăр тесе çавăнта хăпартса тăратнă.

Улпут тăнă та унтан калама тытăннă. Ухмахсем ăна курма пуçтарăннă. Вĕсем ҫăнахах пуçпа алăсемпе ĕçленĕ пекех ĕçлеме вĕрентет пуҫ, тенĕ. Ватă шуйттан ҫĕлхине анҫах хырса йанă Ухмахсене ĕçлемесĕр хырăм тăрантарасси çинҫен вĕрентнĕ.

Ухмахсем ним те тăна кĕреймен. Пăхкаласа тăрсан тăрсан ĕçĕсем çумнелле саланса пĕтнĕ.

Шуйттан пĕр кун тăнă, тепĕр кун тăнă-çаплах леркенĕ. Кун çийесси килнĕ. Ухмахсем, ку пуçпа алăран та ĕнĕçлĕхлĕрех ĕçлет пулсан хăйне валли çăкăр хăпартса пама та пĕлмен. Ват шуйттан тата тепĕр кун пашне çинçе тăрса пăхнă—çаплах лепĕртетнĕ. Халăхĕ пырса тăрат те пăхсан-пăхсан саланат.

Иван та сынсенçен: пирĕн улпут пуçпа ĕçлеме пуçларĕ-ши? тесе ыйтат.

— Çук-ха, теççĕ, çаплах калаçат-ха.

Тата тепĕр кун тăрсан шуйттан вăйран сулăннă, сулкаланмах тапратнă. Пĕрре хытăрах сулăнса йарсан пуçĕпе тунката çумне çапăннă. Пĕр ухмахĕ ăпа курнă та Иван арăмне каласа та кăтартнă, леш упăшкине пĕлтерме уйалла çупнă.

— Атă çасрах, хайхи улпут пуçпа ĕçлеме тапратăн теççĕ, пăхас, тет.

— Çăнах-и? тет.— Иван утне тăварса йарат те çасрах пашне патне çупат. Пырса пăхат-вата шуйттан выçă анранă, пусма тăрăх кутăн тирĕннĕ, пусма картлашкисене шăпах тĕрĕслесе аннă.

— Улпут калани çăнахах пулмалла. Кунашкал ĕçлесен хăмпу мар пуç тăрăх çырмасем те пулĕç, тет Иван.

Ват шуйттан пусма вӗҫне ҫитне хапкӑртаттарса ҫит-
ен пуҫӗпе ҫӗре тирӗннӗ. Йван, улпут ӗҫне курма тесе
н патнелле ҫывӑхарсанах-сасартӑк ҫӗр ҫурӑлса кайнӑ та
атӑ шуйттан ҫӗр тӗпнелле анса кайнӑ, пӗр шӑтӑк анҙах
улнӑ.

Иван пуҫне хыҫса! ӗ-ӗ йӗрӗнҙӗк! Ку каллех лешӗ
улҙӗ пулмалла! Ҫук, ку патмартарах, лешсен ашӗ пул-
алла! тет.

Иван халиҙҙӗнех пӗтӗм халӑх ун патшалӑхне пурӑн-
а куҫать. Пиҙҙӗшсем ун патӗнҙе тӑранса пуранаҫҫӗ. Ки-
ек кам пултӑр, пырса: усра пире тесенех—„пурӑнсам
ра мӗн, пирӗн пурте пур, теҫҫӗ. Ун патшалӑхӗнҙе мӗн
ур саккунӗ те пӗрре анҙах: камӑн алли ӗҫлесе хӑмпӑлан-
ӑ—сӗтел хушшине кӗр, хӑмпӑланманнине—йулашки.

Казань, Третья Государственная типография.